Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРӲШĔН

Юнкун
2007 ç., раштав, 5

100 /9017/№

Хаçат 1932 çултанпа тухса тăрать
Хакĕ ирĕклĕ
электронлă адрес: ibresi@press.cap.ru

# Йĕпреç районĕнче суйлавçăсен 82,07 проценчĕ суйлава хутшăннă, 73,18 проценчĕ «Единая Россия» партийĕн сасăланă.

## «Единая Россия»: 64,1 процент

**РФ Тĕп суйлав комиссийĕ мĕн пур бюллетене шутласа пĕтернĕпе пĕрех. "Единая Россия" пуринчен те нумай сасă пуçтарнă. Уншăн суйлавçăсен 64,1 проценчĕ сасăланă.**

РФ ТСК председателĕ Владимир Чуров туntикун пĕтĕмĕшле кăтартусене палăртса пресс-конференци ирттернĕ: «Патшалăх Думин суйлавĕнче çичĕ процентлă чикĕ урлă тăватă парти каçнă: «Единая Россия» 64,1 процент сасă пухнă, РФКП – 11,6 процент, РЛДП – 8,2 процент, «Справедливая Россия» – 7,8 процент. Суйлав бюллетенне кĕртнĕ ытти партисем, малтан шутланă пекех, лару-тăрăва ылмаштарма пултараймарĕç. Вĕсем çичĕ процентлă «чикĕрен» чылай аякра тăраççĕ».

## Суйлавра йĕркене пăсман

**Раштав уйăхĕн 3-мĕшĕнче Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров республика Правительствин членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.**

Республика пуçлăхĕ канашлăва хутшăннисене ирхине ирех Чăваш Енĕн Тĕп суйлав комиссийĕн председателĕ Людмила Линик раштавăн 2-мĕшĕнче суйлав тĕпрен илсен йĕркеллĕ иртни, ТСК йĕркене пăснă пысăк тĕслĕхсене регистрацилеменни çинчен пĕлтернине каланă. Малтанхи кăтартусем тăрăх, Патшалăх Думине «Единая Россия» партирен кăна депутатсем лекеççĕ, ку парти республикăра тивĕçлипе çĕнтернĕ.

Шалти ĕçсен министрĕ Вадим Антонов сасăлав кунĕнче республикăра лару-тăру лăпкă пулнине палăртнă – шалти ĕçсен органĕсем яланхи кунсемпе танлаштарсан преступленилĕ пулăмсене тăватă хут сахалрах регистрациленĕ.

Паллă ĕнтĕ, кăçал Чăваш Енри экономикăн мĕн пур отраслĕнче производство калăпăшне ӳстерсе пынипе республика бюджетне виçĕ хутчен ылăнусем кĕртнĕ, тупăшсемпе тăкаксен пайĕсене ӳстернĕ. Федераци налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçин Аркадий Дергачевăн прогнозĕ тăрăх, республика бюджечĕ тата вырăнти бюджетсем çулталăкри плана ирттерсе тултарĕç.

Планеркăра республика тĕп хулинче общество транспорчĕ çӳрессине йĕркелемелли çулсене, çавăн пекех маршрут тăрăх çӳрекен «ГАЗельсен» водителĕсене тĕрĕслессине вăйлатас ыйтăва сӳтсе явнă, вĕсен çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнмаллине каланă.

Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕ Нина Суслонова пĕлтернĕ тăрăх, Федерацин пысăк медицина технологийĕсен центрне тума 212 модуль илсе килнĕ, вĕсенчен 79-ăшне вырнаçтарнă, хальхи вăхăтра иккĕмĕш хутра монтаж ĕçĕсем пыраççĕ. Мĕн пур ĕçе графикпа килĕшӳллĕн пурнăçлаççĕ.

Промышленноçпа энергетика министрĕ Юрий Волошин республикăри предприятисен хушшинчи экономика ăмăртăвĕн кăтартăвĕсем çинчен пĕлтернĕ. Вĕсен ĕç-хĕлне социаллă пурнăçпа экономикăри 15 кăтартăва пăхса, çав шутра вăтам ĕç укçи шайне кура та хакланă.

*ЧР ПА пресс-службин.*

## Йĕпреç территориллĕ суйлав комиссийĕ ПĔЛТЕРНИ

**2007 çулхи раштавăн 2-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Федераци Канашĕн пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ иртрĕ. Йĕпреç территориллĕ суйлав комиссийĕ район территорийĕнчи сасăлав пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен пĕлтерет. Районта пĕтĕмпе 29 суйлав комиссийĕ йĕркеленĕ, вĕсем пурте сасăлав пĕтĕмлетĕвĕсен протоколĕсене территориллĕ суйлав комиссине тăратнă, вĕсене тĕпе хурса çак протокола çырса хатĕрленĕ.**

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен сасăлав пĕтĕмлетĕвĕсен протоколĕсем тĕрĕс пулнине палăртнă тата çав протоколсенчи кăтартусене хушнă хыççăн территориллĕ суйлав комиссийĕ çакна çирĕплетет:

Суйлавçăсен списокне сасăлав вĕçлениччен кĕртнисен йышĕ 18051 çын пулнă. Суйлава пĕтĕмпе 14814 çын (82,07%) хутшăннă.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем илнĕ суйлав бюллетенĕсен шучĕ – 19362.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем суйлав кунĕнче сасăламалли пӳлĕмсенче суйлавçăсене панă суйлав бюллетенĕсен шучĕ – 13442.

Суйлав кунĕнче сасăламалли пӳлĕмсен тулашĕнче суйлавçăсене панă суйлав бюллетенĕсен шучĕ – 1372.

Шутран кăларнă суйлав бюллетенĕсен шучĕ – 4548.

Пӳлĕмсен тулашĕнче сасăламалли ещĕксенчи суйлав бюллетенĕсен шучĕ – 1371.

Сасăламалли пӳлĕмсенчи ещĕксенчи суйлав бюллетенĕсен шучĕ – 13441.

Тĕрĕс мар тесе йышăннă суйлав бюллетенĕсен шучĕ – 242.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсем суйлав участокĕсенче суйлав кунĕччен панă çирĕплетмелли (открепительный) удостоверенисен шучĕ – 1492.

Суйлав участокĕсенче çирĕплетмелли удостоверенисемпе сасăланă суйлавçăсен йышĕ – 263.

Шутран кăларнă çирĕплетмелли удостоверенисен шучĕ – 3.

Территориллĕ суйлав комиссийĕ панă çирĕплетмелли удостоверенисен шучĕ – 155.

Суйлав бюллетеньне кĕртнĕ кашни политика партийĕшĕн суйлавçăсем çакăн чухлĕ сасă панă:

1. «Раççейри аграри партийĕ» политика партийĕ – 222 (1,50%).
2. «Гражданла вăй» Пĕтĕм Раççейри политика партийĕ – 34 (0,23%).
3. «Раççейри демократиллĕ парти» политика партийĕ – 27 (0,18%).
4. «Раççей Федерацийĕнчи коммунистсен партийĕ» политика партийĕ – 1333 (8,99%).
5. «Сылтăм вăйсен союзĕ» политика партийĕ – 26 (0,18%).
6. «Социаллă тĕрĕслĕх партийĕ» политика партийĕ – 22 (0,15%).
7. «Раççейри либераллă-демократи партийĕ» политика партийĕ – 887 (5,99%).
8. «Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей: Тăван çĕршыв, Пенсионерсем, Пурнăç» политика партийĕ – 988 (6,67%).
9. «Раççей патриочĕсем» политика партийĕ – 125 (0,84%).
10. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» Пĕтĕм Раççейри политика партийĕ – 10839 (73,18%).
11. «Яблоко» Раççейри пĕрлештернĕ демократи партийĕ» политика партийĕ – 67 (0,45%).

***Территориллĕ суйлав комиссийĕн председателĕ В. К. ГОРДЕЕВ.***
***Территориллĕ суйлав комиссийĕн секретарĕ С. Н. ТУРБИНА.***

Йĕпреç поселокĕ, 2007 çулхи раштавăн 3-мĕшĕ.

## ТĔРĔС УТĂМ

Суйлав иртрĕ те хĕрӳлĕх
Куçĕ депутатсене.
Думăн çĕнтерӳллĕ çулĕ
Пĕрлештерĕ вĕсене.
Лайăххишĕн, тивĕçлишĕн
Алăк хупăнмĕ хыçран:
Çĕнĕрен суйланнă йышăм
Мандат илчĕ халăхран.
Ку хисеп тухмасть пурне те,
Сăлтавне ăнланмалла:
Вăрлăх сăвăрнă чухне те
Ӳкет хывăх аяла.

Шантару сăмахĕн пыллă
Ултавне валеçекен
Çынсенчен мĕн тăрса юлнă? –
Сăсăл çеç вĕçет иккен.
Пакăлти чĕлхе-çăварăн
Çук чаракĕ, çаванпа
Эс, суйлавçă, ху каларăн:
«Утмăпăр çав ушкăнпа».
Эп пĕр партилĕх тăвасшăн
Нихăçан та ăнтăлман.
Виçĕм кун, мĕнле калас та,
Тĕллĕ килчĕ сассăм ман.
Ман пекки мĕльюн-мĕльюнăн
Пулчĕ мар-и суйлавра!

Эс, раштав вырсарни кунĕ,
Йыша пухрăн ху тавра.
Вăрттăн сасăлав пулсан та
Пĕрешкел шухăшлисен
Нумайăшĕн хаваслантăм
Сиренĕ пĕрлех, туссем!..
Чун-чĕре тапать телейĕн
Çĕкленсе, пĕр çемĕпе.
Хĕпĕрте, тăван Раççейĕм,
Утнă май çĕн çул-йĕрпе!

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

2007 çулхи раштавăн 3-мĕшĕ.

## ХАЛĂХ СУЙЛАСА ИЛНĔ ПАРТИ ПУРИНЧЕН ТЕ МАЛТА

Тунтикун ирпе ЧР ТСК председателĕ Людмила Линик пресс-конференци ирттернĕ, суйлавăн малтанхи кăтартăвĕсемпе паллаштарнă. Раштав уйăхĕн 3-мĕшĕнчи ирхи ултă сехет тĕлне протоколсен 98 проценчĕ пăхса тухнă. Тĕп суйлав комиссийĕн кăтартăвĕсем тăрăх, пĕтĕмпе парламента тăватă парти лекет. «Единая Россия» пурне те чылай кая хăварнă. Вăл 62,49 процент сасă пуçтарнă. Асăннă партийĕн республикăра пурăнакан 427905 çын сасăланă. «Единая Россия» Шăмăршă районĕнче чи нумай сасă пухнă (91,32 процент), унтан Улатăр районĕнче (80,93 процент), виççĕмĕш вырăнта – Елчĕк районĕ (77,5 процент).

«Единая Россия» парти хыççăн иккĕмĕш вырăнта – РФКП. Унăн – 12,64 процент (86565 суйлавçă). Коммунистсене Шупашкар хулин Калинин районĕнче пурăнакансем ытларах кăмăлланă – 16,33 процент. Элĕксем РФКПшăн 13,70 процент сасăланă.

Виççĕмĕш вырăнта – «Тĕрĕслĕхшĕн тăракан Раççей» (10,38 процент, 71106 çын). Ку партишĕн Патăрьел районĕнче нумайăн сасăланă – 17,24 процент, Çĕнĕ Шупашкарта – 15,22 процент.

Çичĕ процент урлă каçнă тепĕр парти – РЛДП (8,53 процент, 58410 суйлавçă). Либерал-демократсене Çĕнĕ Шупашкарсем кăмăллани курăнать. Кунта чи пысăк кăтарту – 12,12 процент. Иккĕмĕш вырăнта – Шупашкар хулин Ленин районĕ (11,58 процент).

## МАНĂН САСĂ ТА ХОРА ЯНРАВ КӲРЕТ

Çак кунсенче савккасем «Чăвашавтодор» ПУПйĕн Йĕпреçри çул-йĕр управленийĕн рабочийĕсенчен лайăх парне илчĕç: вĕсен ялне Йĕпреç – Канаш автоçулпа хытарнă çул çыхăнтарнă. Çак çула уçнă ятпа иртнĕ савăнăçлă тĕлпулăва Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров хăй хутшăнчĕ. Çавăн чухнеăна савккасем Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕнче хăйсен сассисене «Пĕрлĕхлĕ Раççей» Пĕтĕм Раççейри политика партийĕшĕн пама пулни çинчен шантарса каларĕç. Акă вĕсен кăтартăвĕ: суйлав кунĕнче икĕ ял – Савккапа Çĕнĕ Кĕлĕмкасси çыннисем хăйсен гражданла тата Конституци тивĕçне пурнăçласа, мĕнпур суйлавçăсен 87,04 проценчĕ асăннă партишĕн сасăларĕ, çапла вара вĕсем В. В. Путин тытса пыракан çул-йĕре ырлани çинчен пĕлтерчĕç.

Çакна палăртмалла, пирĕн районти суйлавçăсен ытларах йышĕ «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти программипе планĕсене хапăлласа йышăнчĕ. Ку енĕпе Энтриел ял тăрăхĕ çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ. Суйлав кунĕнче суйлав участокне пынă 610 çынран (списока кĕртнисен 99,7%) 557-шĕ (84,39%) хăйсен сассисене «Пĕрлĕхлĕ Раççейшĕн» пачĕç. Çавăн пекех Буинск (2), Эйпеç (3), Пăкăян (4), Пысăк Упакасси (5) ял тăрăхĕсенче пурăнакансем пĕр шухăшлăхĕ те лайăх палăрчĕ.

Энтриел, Эйпеç, Березовка, Пăкăян, Буинск ял тăрăхĕсенчи суйлавçăсен активлăхĕ те пысăк пулчĕ çав кун. Участоксенчи суйлав комиссийĕсен хушшинче, эпир çӳлерех асăнтăмăр ĕнтĕ, чи малти вырăнта савккасем тăраççĕ. Вĕсем «Пĕрлĕхлĕ Раççейшĕн» панă районти вăтам кăтартуран чылаях çӳле çĕкленчĕ. Ун хыççăнхи вырăнсене çаксем йышăнаççĕ: Çĕрпӳел УСК (85,17%), Тури Кĕлешкасси (84,59%), Энтриел (84,96%), Буинск (83,66%), Хумпуç Патăрьел (79,70%)... Кĕлĕмкассинчи участокри суйлав комиссийĕ (60,89%) таблицăна вĕçлет.

## ХИСЕПЛĔ ЯТ ПАНĂ

Чăваш Республикин Президенчĕн 2007 çулхи чӳк уйăхĕн 28-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн строительство отраслĕнче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн **Вячеслав Николаевич КОЗЛОВА** – Чăваш Республикинчи «Чăвашавтоçул» патшалăх унитарлă предприятийĕн «Йĕпреçри çул-йĕр управленийĕ» филиалĕн директорне «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ» хисеплĕ ят панă.

## ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

Ял хуçалăх производствинче чылай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн «Заря» колхозăн çак ĕçченĕсене районăн Хисеп грамотипе наградăланă:

**Нина Васильевна ВАСИЛЬЕВАНА**, разнорабочие;

**Ирина Витальевна РАКОВАНА**, дояркăна.

**7 декабря 2007 года с 10.00 до 12.00 в Ибресинском секторе Вурнарского отдела Управления Федеральной регистрационной службы по Чувашской Республике состоится прямая телефонная линия по вопросам реализации в республике закона о "дачной амнистии". На вопросы будет отвечать начальник Вурнарского отдела Тимофеева Людмила Владимировна. Телефон «горячей линии» 2-16-74.**

## *ПОСТАНОВЛЕНИЕ*
### *главы Ибресинского района*
## О занесении на Доску почета Ибресинского района

Рассмотрев ходатайства администраций сельских и городского поселений Ибресинского района, **постановляю:**

За достигнутые успехи в труде, активную общественную работу и в связи с 80-летием образования Ибресинского района занести на Доску почета Ибресинского района следующих граждан района:

1. **АКШАРОВУ Светлану Николаевну** – заведующую Малокармалинской модельной библиотекой;
2. **АЛИМАСОВА Константина Дмитриевича** – главного редактора РГУ «Редакция Ибресинской районной газеты «За победу»;
3. **АРЕСТОВУ Евгению Васильевну** – пенсионера пос. Буинск, председателя районного Совета пенсионеров;
4. **АРСЕНТЬЕВА Владимира Тимофеевича** – тракториста колхоза «Трудовик»;
5. **ВЛАДИМИРОВУ Людмилу Михайловну** – учителя математики Березовской основной общеобразовательной школы;
6. **ГОЛЬКИНУ Елену Ивановну** – продавщицу магазина Ибресинского райпо;
7. **ЗАХАРОВУ Раису Ивановну** – учителя истории Ширтанской основной общеобразовательной школы;
8. **ЗАХАРОВА Вениамина Захаровича** – пенсионера деревни Вудоялы;
9. **ЗАХАРОВА Николая Петровича** – тракториста ООО «Водстроймонтаж»;
10. **ИВАШКИНА Вениамина Семеновича** – тракториста колхоза имени Ильича;
11. **ИЛЬИНА Вениамина Филипповича** – пенсионера, депутата Собрания депутатов Климовского сельского поселения;
12. **КАРУШКИНУ Наталию Юрьевну** – заместителя директора по воспитательной работе Ибресинской средней общеобразовательной школы № 2;
13. **КРАСНОВУ Ульяну Васильевну** – пенсионера села Новое Чурашево;
14. **МАРКОВУ Надежду Анатольевну** – учителя математики Хормалинской средней общеобразовательной школы;
15. **МИХАЙЛОВУ Ларису Ильиничну** – директора Чуваштимяшской средней общеобразовательной школы;
16. **НАУМОВА Сергея Петровича** - пенсионера, депутата Собрания депутатов Новочурашевского сельского поселения;
17. **НИКИТИНА Сергея Николаевича** – директора ООО «Ибресиагрострой»;
18. **ОСТАШИНУ Галину Петровну** – пенсионера пос. Ибреси;
19. **ПЕТРОВУ Еву Алексеевну** – заведующую Климовским детским садом «Теремок»;
20. **РАКОВА Анатолия Лукича** – тракториста колхоза «Заря»;
21. **ТИМУКОВУ Клавдию Петровну** – специалиста администрации Хормалинского сельского поселения;
22. **УТКИНА Илью Терентьевича** – пенсионера дер. Айбечи;
23. **ФЕДОРОВА Сергея Анатольевича** – индивидуального предпринимателя д. Малое Батырево;
24. **ФИЛИППОВУ Римму Алексеевну** – заведующую молочно-товарной фермой колхоза имени Кирова;
25. **ХАЙБУЛЛИНА Рамиля Кияметдиновича** – индивидуального предпринимателя пос. Буинск;
26. **ШАЛЯЕВУ Надежду Васильевну** – пенсионера, депутата Собрания депутатов Ибресинского городского поселения;
27. **ШИШКИНУ Зою Михайловну** – фельдшера Огоньковского фельдшерско-акушерского пункта;
28. **ЯКОВЛЕВУ Раису Алексеевну** – повара Андреевского детского сада «Чĕкеç».
29. **ЯМУТКОВУ Ольгу Петровну** - врача общей практики Чернореченского отделения общей практики МУЗ «Ибресинская ЦРБ».
30. **ЯНДУТОВА Анатолия Семеновича** – частного предпринимателя пос. Бугуян.

**Глава Ибресинского района**
**А. И. ПЕТРОВ.**
п. Ибреси, 27 ноября 2007 года, №745.

## *ПОСТАНОВЛЕНИЕ*
### *главы Ибресинского района*
## О награждении победителей районного конкурса профессионального мастерства «Лучшие молодые специалисты года» по итогам 2007 года

Рассмотрев ходатайство комиссии по присвоению званий «Лучшие молодые специалисты года», **постановляю:**

1. Присвоить звание «Лучший молодой специалист года» следующим представителям молодежи:

**АЛЕКСАНДРОВОЙ Наталии Николаевне** – музыкальному руководителю МДОУ «Новочурашевский детский сад «Колосок», победителю в номинации «Лучший молодой работник образования»;

**ГИМАЛДИНОВУ Рустаму Феридовичу** – врачу акушеру-гинекологу МУЗ «Ибресинская ЦРБ», победителю в номинации «Лучший молодой работник здравоохранения»;

**ТРОФИМОВУ Александру Константиновичу** - участковому уполномоченному милиции отделения участковых уполномоченных милиции отдела внутренних дел по Ибресинскому району Чувашской Республики, победителю в номинации «Лучший молодой сотрудник правоохранительных органов»;

**КОПЕЕВОЙ Вере Дмитриевне** – заведующей Малокармалинским магазином «Товары повседневного спроса», победителю в номинации «Лучший молодой работник торговли»;

**КОНДРАТЬЕВУ Евгению Валерьевичу** – мастеру производственного отдела ООО «Древстрой» Ибресинского района, победителю в номинации «Лучший молодой работник лесного хозяйства и лесопромышленности»;

**ИВАНОВОЙ Наталии Васильевне** – директору Новочурашевского сельского Дома культуры, победителю в номинации «Лучший молодой работник культуры»;

**АЛЕКСЕЕВУ Сергею Николаевичу** – скотнику колхоза «Красный партизан», победителю в номинации «Лучший молодой специалист в отрасли мясного животноводства»;

**НИКИТИНОЙ Наталии Вениаминовне** – доярке СПК «Патман», победителю в номинации «Лучший молодой специалист в отрасли молочного животноводства»;

**ИВАНОВУ Алексею Петровичу** – трактористу Ибресинского ДРСУ филиала ГУП ЧР «Чувашавтодор», победителю в номинации «Лучший молодой механизатор»;

**ТУРБИНУ Евгению Александровичу** – водителю Ибресинского ДРСУ филиала ГУП ЧР «Чувашавтодор», победителю в номинации «Лучший молодой строитель»;

**ТЕРЕНТЬЕВОЙ Алине Петровне** – ведущему специалисту отдела организационной работы администрации Ибресинского района, победителю в номинации «Лучший молодой работник муниципальной (государственной) службы»;

**САПЕРОВОЙ Марине Николаевне** – индивидуальному предпринимателю, победителю в номинации «Лучший молодой индивидуальный предприниматель»;

**ИВАНОВУ Алексею Сергеевичу** – водителю МУП «БТИ» Ибресинского района, в номинации «Лучший молодой водитель».

2. Наградить победителей районного конкурса профессионального мастерства грамотами и ценными призами за счет средств отдела образования администрации Ибресинского района.

3. Контроль за исполнением постановления возложить на Николаева А. А. - начальника отдела образования администрации Ибресинского района.

**Глава Ибресинского района**
**А. И. ПЕТРОВ.**
п. Ибреси, 27 ноября 2007 года, №746.

**ПОТРЕБКООПЕРАЦИ**



# РАЙПО ХĂЙĔН МАРКИНЕ ТЫТСА ТĂРАТЬ

Кăçалхи юпа-чӳк уйăхĕсенче районта кооператив участокĕсенчи пайщиксен отчетпа суйлав пухăвĕсем иртрĕç. Вĕсенче, тĕпрен илсен, районти потребкооперации ĕçĕ-хĕлĕпе малашнехи аталанăвĕ çинчен калаçу пынă, ял çыннисене хумхантаракан ыйтусене, сăмахран, хушма хуçалăх аталанăвĕпе, хушма пулăшу ĕçĕсемпе, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем туса хурассипе, суту-илӳпе обществăлла апатлану предприятийĕсен таврашĕсене тирпей-илем кĕртессипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă. Пайщиксем сентресем тĕрлĕ апат-çимĕç тата куллен кирлĕ таварсемпе пуян пулнине кăмăлтан пĕлтернĕ. Ялта халĕ кашни магазинта тенĕ пекех чей ĕçмелли сĕтелпе пĕрле халăх библиотеки пур. Пухусене хутшăннисем вырăнти магазин сутуçисене ял çыннисемшĕн тăрăшнăшăн тав сăмахĕ калană. Çавăн пекех вырăнти кооператорсен ĕçне лайăхлатас тата çивĕч тăракан ыйтусене татса парас тĕлĕшпе сĕнӳсем панă.

Çĕнĕрен суйланнă уполномоченнăйсем чӳк уйăхĕн 19-мĕшĕнче Йĕпреç райпо совечĕн ертӳçин Валентина Пахомован докладне сӳтсе явма пухăнчĕç. Тунă ĕç-хĕл çинчен отчетпа тухса калаçасси – пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Енчен те хăвна шанса панă хуçалăхра пурте йĕркеллĕ пулсан, халăх умĕнче калаçма самай çăмăлтарах. Ахальтен мар ĕнтĕ совет председателĕн сăмахĕнче тĕрĕс çулйĕрпе малалла талпăнни, малашлăха çирĕп шанни уçăмлăн туйăнчĕ.

Валентина Павловна палăртнă тăрăх, Йĕпреç кооператорĕсен отчетлă тапхăрĕ япăх мар кăтартусемпе вĕçленет. Юлашки çулсенче райпо конкуренцин хĕрхенӳсĕр условийĕсенче ĕçлет. Паянхи кун районта, тĕслĕхрен, 182 суту-илӳ точки ĕçлет, вĕсенчен 57-шĕ – потребительсен кооперацийĕн (41 магазин вара яллă вырăнта вырнаçнă). Ăнланмалларах каласан, ваккăн сутмалли тавар çаврăншĕн виççĕмĕш пайне райпо йышăнать. Паян конкуренцие хирĕç тăрас тесен аталанун хушма резервĕсене шырама тивет: суту-илĕве анлăлатмалла, лавккасене экономкласс шайне çитермелле, суту-илӳ вырăнĕсемпе пĕлсе усă курмалла, поставщиксемпе ĕçлессине çĕнетсе лайăхлатмалла. Потребкооперации халĕ те инçетри яла çăкăрпа шăрпăк, тăвар турттарса тăракан пĕртен-пĕр организаци пулса тăчĕ.

Кооператорсем суту-илӳре те, производствăра та ӳсĕмсем тунă. Кăçалхи 10 уйăхра ваккăн сутмалли таварçаврăнăш планне 106,8 процент пурнăçланă. Юлашки вăхăтра суту-илӳ объекчĕсене çĕнĕ сăн кĕртес ĕç тулли хăватпа пырать. Çуллахи кунсенче Йĕпреçри «Дежурный» магазина реконструкциленĕ хыççăн кунти коллектив самообслуживанин çĕнĕ меслечĕпе тата талăкри кун йĕркипе ĕçлет. Çакнашкал магазинсем Йĕпреçри «Гастронома» тата Буинскри куллен кирлĕ таварсен магазинĕнче уçнă. Çак çĕнетĕве ĕçе кĕртме сахал мар укçа-тенкĕ тăкакланă. Хальхи вăхăтра ялти темиçе магазинта тĕп юсав ĕçĕсем пыраççĕ.

Обществăлла апатлану предприятийĕсем 10 уйăхри задание 100 процент пурнăçланă. Динамика – 114,3 процент. Отчетлă тапхăрта пайщиксен наказĕсене пурнăçласа «Чĕкеç» ресторанта 2 млн. тенкĕлĕх юсав ĕçĕсем пурнăçланă, апатланмалли залсене анлăлатнă, интерьерпа дизайн тĕлĕшĕнчен çĕнетсе илемлетнĕ. Çавăн пекех «Юность» кафере шыв пăрăхĕсене улăштарнă, канализацие юсанă.

Кăçалхи 10 уйăхра çăкăр завочĕ 825,5 тонна çăкăр тата булка изделийĕсем пĕçерсе сутлăха ăсатнă. Сăмах май, кунта пахалăхлă çăкăр пĕçереççĕ, ăна хапăл туса туянаççĕ. Çăкăр заводĕнче шыв пăрăхĕсене юсанă, чуста çăракан, якатакан тата ытти ĕçсене пурнăçлакан çĕнĕ машинăсем туяннă.

Çĕвĕ цехĕ лайăх ĕçлет. Кунта çĕлекен вырăн таврашне ыйтакансем нумай. Пулă цехĕн 19 тĕрлĕ продукцийĕ те лавкка сентрисем çинче нумай выртмаççĕ. «Илем салонĕ» те тупăшлă ĕçлет, унвалли çак кунсенче хальхи вăхăтри питĕ меллĕ оборудовани туянса панă.

Пухура тухса калаçнă уполномоченнăйсем – Л. Никифорова (Эйпеç), П. Петров (Пучинке), Е. Арестова (Буинск), А. Алексеевапа Н. Кузюков (Хурамал) проблемăсемпе резервсем пирки уçăмлăн чарăнса тăчĕç. Вĕсем райпо хăйĕн маркине тытса пынине тата пурнăç таппипе тан утнине палăртса хăварчĕç. Отчетпа суйлав пухăвне хутшăннă Чăвашпотребсоюз совечĕн председателĕ В. Павлов та районти потребкооперации ĕçне тивĕçлĕ хак пачĕ. Вăл Чăвашпотребсоюз организацийĕсемпе предприятийĕсен экономика ăмăртăвĕнче Йĕпреç райповĕ кăçалхи виççĕмĕш квартал пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлпе пĕрремĕш вырăн йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. Килĕшмех тивет, çак çитĕнӳ – пĕтĕм коллективăн кулленхи канăççăрлăхĕпе тăрăшулăхĕ. Валерий Михайлович хăйĕн шухăшне пĕлтерчĕ: «Сирĕн пухура мĕнле ĕçлени тата лайăхрах пурăнасси çинчен уçăмлăн та ĕçлĕ, малашлăха пăхса калаçни питĕ кăмăла кайрĕ. Енчен те вырăнти потребкооперацие сирĕнни пек опытлă совет председателĕ ăнăçлă ертсе пырать пулсан – коллективăн малашлăхĕ питĕ пысăк».

Уполномоченнăйсем райпо совечĕн председателĕн йывăр лавне тепĕр пилĕк çуллăха Валентина Павловна Пахомованах шанса пачĕç. Советăн çĕнĕ йышне Е. Исаевана, В. Гордеева, Н. Григорьева, Г. Егорова, К. Алимасова тата Н. Чугарова кĕртме йышăнчĕç. Пухура çавăн пекех ревизи комиссийĕн членĕсене (председателĕ Е. Сергеева) тата чăвашпотребсоюз ĕçне хутшăнма вырăнти потребкооперацин представителĕсене суйларĕç.

***К. ДМИТРИЕВ.***

**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ**: *отчетпа суйлав пухăвĕн президиумĕ ĕçе пуçăнас умĕн; «Гастроном» магазин реконструкци хыççăн самообслуживани йĕркипе ĕçлет.*



# РЕШЕНИЕ Собрания депутатов Ибресинского района

## О внесении изменений в решение Собрания депутатов Ибресинского района от 12.12.2006 г. № 12 «О бюджете Ибресинского района на 2007 год»

Внести в решение Собрания депутатов Ибресинского района от 12.12.2006 г. №12 «О бюджете Ибресинского района на 2007 год» следующие изменения:

1) статью 1 изложить в следующей редакции:

**Статья 1**

Утвердить бюджет Ибресинского района Чувашской Республики на 2007 год по расходам в сумме 266004,1 тыс. рублей, по доходам – 260143,9 тыс. рублей, в том числе собственные доходы – 161192,6 тыс. рублей, из низ доходы района – 26123,9 тыс. руб., безвозмездные поступления из республиканского бюджета Чувашской Республики –135068,7 тыс. рублей (в том числе: средства Республиканского фонда финансовой поддержки муниципальных районов и городских округов Чувашской Республики 65445,5 тыс. рублей, дотации на поддержку мер по обеспечению сбалансированности бюджетов – 7452,7 тыс. рублей, средства Республиканского фонда муниципального развития – 42500,0 тыс. рублей, средства республиканского фонда софинансирования социальных расходов – 12443,7 тыс. руб., субсидии из республиканского бюджета – 3219,0 тыс. руб., средства по взаимным расчетам – 4007,8 тыс. руб.); субвенции из Республиканского фонда компенсаций – 87861,9 тыс. рублей и доходов от предпринимательской деятельности – 11089,4 тыс. рублей.

Установить предельный размер дефицита бюджета Ибресинского района Чувашской Республики в сумме 5860,2 тыс. рублей, или 9,6 %, в том числе за счет поступлений от продажи акций и земли в сумме 2275,5 тыс. руб.

**2) в статье 3:**

в абзаце втором слова «180969,6 тыс. рублей» заменить словами «208675,9 тыс. руб.»;

в абзаце третьем слова «68067,3 тыс. рублей и 66060,1 тыс. рублей» заменить словами «57328,2 тыс. руб. и 49897,8 тыс. руб.» ;

в абзаце шестом слова «5000,0 тыс. руб. и 2000,0 тыс. руб.» заменить словами «5000,0 тыс. руб. и 2500,0 тыс. руб.» соответственно;

3) **внести изменения в приложение №3** «Доходы бюджета Ибресинского района на 2007 год» изменения согласно приложению 1 к настоящему решению.

4) **внести изменения в приложение №4** «Распределение расходов местного бюджета по разделам и подразделам функциональной классификации расходов бюджетов Российской Федерации» согласно приложению №2 к настоящему Решению;

5) **внести изменения в приложение №5** «Распределение расходов местного бюджета по разделам, подразделам, целевым статьям и видам расходов функциональной классификации расходов бюджетов Российской Федерации» согласно приложению №3 к настоящему Решению;

6) **внести изменения в приложение №6** «Распределение расходов местного бюджета по главным распорядителям по разделам, подразделам, целевым статьям и видам расходов функциональной классификации расходов Российской Федерации» согласно приложению №4 к настоящему Решению.

7) **внести изменения в приложение №7** «Инвестиционная программа Ибресинского района на 2007 год» согласно приложению №5 к настоящему решению.

В **приложение №8** «Программа муниципальных внутренних заимствований Ибресинского района на 2007 год» согласно приложению №6 к настоящему решению;

8) **в статье 17:**

абзац первый дополнить словами «с последующим внесением изменений в настоящее Решение»;

в абзаце втором после слов «при передаче» дополнить словами «субсидий и субвенций», слова «дополнительных средств» исключить;

абзацы третий и пятый признать утратившими силу.

9) **в статье 21:**

в части 1 слова «21028,3 тыс. рублей» заменить словами «21161,9 тыс. рублей»;

внести изменения в приложение №11 «Распределение поселениям дотаций на выравнивание уровня бюджетной обеспеченности на 2007 год» согласно приложению №7 к настоящему решению.

10) **в статье 22:**

в абзаце первом слова «85096,2 тыс. рублей» заменить словами «87861,9 тыс. рублей»;

в пункте «б»:

в абзаце пятом слова «21128,3 тыс. рублей» заменить словами «21261,9 тыс. рублей»;

в абзаце шестом слова «231,6 тыс. рублей» заменить словами «1200,2 тыс. рублей, в том числе на расходы по расчету и предоставлению субвенций – 0,2 тыс. рублей», внести изменения в приложение 13 согласно приложению №8 к настоящему Решению;

абзац девятый пункта «б» считать абзацем шестым пункта «в»;

в пункте «в»:

в абзаце третьем слова «51861,2 тыс. рублей» заменить словами «53542,1 тыс. рублей»;

в абзаце пятом слова «3671,0 тыс. рублей» заменить словами «3297,2 тыс. рублей»;

абзацы второй и четвертый пункта «в» считать абзацем десятым и одиннадцатым пункта «б»;

В части 2 слова «3671,0 тыс. рублей» заменить словами «3297,2 тыс. рублей», внести изменения в приложение №14 согласно приложению №9 к настоящему Решению.

11) **в статье 25:**

абзац второй дополнить словами «в сумме 1000,0 тыс. рублей»;

абзац третий считать утратившим силу;

дополнить абзацами следующего содержания:

«внедрение комплексного проекта модернизации образования в Ибресинском районе в 2007 году в сумме 2329,0 тыс. рублей»;

переселение граждан из аварийного жилого фонда в сумме 2500,0 тыс. рублей».

12) дополнить частями 2 и 3 следующего содержания:

Учесть, что в расходах по разделу «Образование» бюджета Ибресинского района предусмотрены ассигнования на:

поощрение лучших учителей в сумме 100,0 тыс. рублей;

выплату вознаграждения за выполнение функций классного руководителя педагогическим работникам муниципальных образовательных учреждений в сумме 2950,3 тыс. рублей;

внедрение комплексного проекта модернизации образования в Ибресинском районе в 2007 году в сумме 2329,0 тыс. рублей;

Направить средства на реализацию пилотного проекта, направленного на повышение качества услуг в сфере здравоохранения в сумме 2500,0 тыс. рублей за счет средств, предусмотренных по разделу «Здравоохранение».

13) **в части 2 статьи 31** слово «обязательным» исключить;

14) **в статье 32:**

а) часть 3 признать утратившей силу;

б) часть 5 признать утратившей силу.

15) **статью 38** признать утратившей силу;

16) **в статье 40:**

в абзаце втором слова «по ставке 0 процентов» заменить словами «по ставке 0,1 процента».

***Глава Ибресинского района***
***А. И. ПЕТРОВ.***

п. Ибреси, 23 ноября 2007 года, №18.

Приложение №2

### Распределение расходов местного бюджета по разделам, подразделам функциональной классификации расходов Российской Федерации

| Наименование показателя | Рз | ПР | тыс.руб |
|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | |
| **Общегосударственные вопросы** | **01** | | **1590,48** |
| *Функционирование Правительства Российской Федерации, высших органов исполнительной власти субьектов РФ и местного самоуправления* | **01** | 04 | 1820,48 |
| *Обслуживание государственного и муниципального долга* | **01** | 12 | -150,00 |
| *Резервные фонды* | **01** | 13 | -80,00 |
| **Национальная экономика** | **04** | | **314,30** |
| *Сельское хозяйство и рыболовство* | **04** | 05 | 68,00 |
| *Другие вопросы в области национальной экономики* | **04** | 11 | 246,30 |
| ***Коммунальное хозяйство*** | **05** | 02 | **220,00** |
| **Охрана окружающей среды** | **06** | | -70,00 |
| *Охрана растительных и животных видов и среды их обитания* | **06** | 02 | -70,00 |
| **Образование** | **07** | | **9019,77** |
| *Дошкольное образование* | **07** | 01 | 1267,35 |
| *Общее образование* | **07** | 02 | 7494,43 |
| *Молодежная политика и оздоровление детей* | **07** | 07 | 321,30 |
| *Другие вопросы в области образования* | **07** | 09 | -63,31 |

### Инвестиционная программа Ибресинского рай
### на 2007 год

| Наименование работ |
|---|
| 1. Текущий ремонт крыши РДК п. Ибреси |
| 2. Проектные работы на разработку генплана п. Ибреси |
| 3. Текущий ремонт отделения врача общей (семейной) практики в с. Н.Чурашево |
| 4. Текущий ремонт Бугуянского детского сада |
| 5. Строительство блочно - модульной котельной для теплоснабжения жилого дома п.Ибреси, ул. Леспромхозная, 13 |
| 6. Капитальный ремонт РДК п. Ибреси |
| 7. Ремонтные работы по восстановлению пропускной способности канализационной сети в районе очистных сооружений |
| 8. Строительство водопровода к жилым домам по ул. Леспромхоза,д.13 ул. Дмитрова, д. 13 |
| 9. Проектно - сметная документация по подключению ФОК к электросет |
| 10. Проектно - сметная документация по полигону твердых бытовых отходов |
| 11. Проектно сметная документация по Андреевской ООШ |
| ИТОГО |

### Программа муниципальных внутренних заимствований, для покрытия дефицита бюджета Ибресинского рай на 2007 год

| № п/п | Внутренние заимствования | Объем заимствований в течение 2006г. |
|---|---|---|
| | **Всего** | **5860,2** |
| 1 | Бюджетные кредиты | |
| 2 | Кредиты банковских учреждений | |
| | -привлечено | |
| | -погашено | |
| 3 | Муниципальные займы | |
| 4 | Продажа муниципального имущества | 2275,5 |
| 5 | Свободный остаток бюджетных средств | 3584,7 |
| 6 | Приобретение (увеличение стоимости) земельных участков, находящихся в государственной и муниципальной собственности | |

**Приложение №7**

### Распределение поселениям дотаций на выравнивание уровня бюджетной обеспеченности на 2007 год

| № пп | Наименование поселений | Сумма (тыс. руб.) |
|---|---|---|
| 1 | Айбечское | 7,6 |
| 2 | Андреевское | 5,1 |
| 3 | Березовское | 3,1 |
| 4 | Б-Абакасинское | 7,1 |
| 5 | Буинское | 7,8 |
| 6 | Ибресинское | 44,9 |
| 7 | Кировское | 4 |
| 8 | Климовское | 8,5 |
| 9 | М-Кармалинское | 8,8 |
| 10 | Н-Чурашевское | 8,4 |
| 11 | Хормалинское | 12,9 |
| 12 | Ч-Тимяшское | 9,1 |
| 13 | Ширтанское | 6,3 |
| | **ИТОГО** | **133,6** |

Приложение №9

### Распределение поселениям субвенций на выплату субсидий населению на оплату жилого помещения и коммунальных услуг в соответствии со статьей 159 Жилищного кодекса Российской Федерации на 2007 год

| № п/п | Наименование поселений | Сумма (тыс. руб.) |
|---|---|---|
| 1 | Айбечское | -20 |
| 2 | Андреевское | -25 |
| 3 | Березовское | -20 |
| 4 | Большеабакасинское | -50 |
| 5 | Буинское | -30 |
| 6 | Ибресинское | -100 |
| 7 | Кировское | -10 |
| 8 | Климовское | -20 |
| 9 | Малокармалинское | -10 |
| 10 | Новочурашевское | -18,8 |
| 11 | Хормалинское | -30 |
| 12 | Чувашско-Тимяшское | -20 |
| 13 | Ширтанское | -20 |
| | **ИТОГО** | **-373,8** |

Приложение №8

### Распределение поселениям субвенций по обеспечению жилыми помещениями по договорам социального найма категориям граждан, указанным в части 1 статьи 11 Закона Чувашской Республики "О регулировании жилищных отношений" на 2007 год

| № п/п | Наименование поселений | Сумма |
|---|---|---|
| 1 | Ибресинское | 968,6 |
| | **ИТОГО** | **968,6** |

«АПК АТАЛАНĂВĔ» НАЦПРОЕКТ

# АГРАРНИК-ЖУРНАЛИСТСЕН ТИВĔÇЛĔ ĔÇĔ МĔНРЕ?

**Иртнĕ эрнере республикăн ял хуçалăх министерствинче «Регион пресси – «АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проектне тухăçлă пурнăçа кĕртмелли ресурс» темăпа «çавра сĕтел» иртнĕ. Темăна сӳтсе явма РФ Патшалăх Думин депутачĕ, «Раççейри аграри юхăмĕ» общество организацийĕн ертӳçи В. Денисов, вице-премьер – культура, национальноç ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ Н. Володина, вице-премьер – ял хуçалăх министрĕ М. Игнатьев, Раççейри аграри журналисчĕсен Ассоциацийĕн ĕç тăвакан директорĕ А. Смородов, «Россельхозбанкăн» Чăваш регион филиалĕн директорĕ И. Письменская хутшăннă.**

Форума уçнă май Н. Володина çакна палăртнă: массăллă информаци хатĕрĕсен тĕллевĕ – чиновниксемпе граждансен пĕрлешĕвĕ хушшинчи çыхăнăва йĕркелесси. Ку енĕпе Чăваш Енри журналистсен ушкăнĕ, Раççейри чылай регионсемпе танлаштарсан, самай çӳлти шайра тăрать. Çакна Наталья Ивановна чылай çĕрте пулса хăй куçĕпе курнă. Министр район хаçачĕсен журналисчĕсене проблемăсене куç умне кăларса хăйсен шухăшĕсене пĕлтерме, темăна ĕçлĕ лару-тăрура сӳтсе явма чĕнсе каланă.

Хальхи «çавра сĕтел» Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче иртнĕ çакнашкал 25 мероприятин ярăмне вĕçлет, пĕрремĕш ларăва вара пĕлтĕрхи çулла шăпах Чăваш Енре ирттернĕ. Кунта çулталăк çурă каялла Раççейре туса хунă аграри журналисчĕсен Ассоциацийĕ (унта паянхи кун тĕлне 700 ытла издани кĕрет) паллă вырăн йышăнать. В. Денисов пĕлтернĕ тăрăх, регионсенчи МИХсем нацпроекта пурнăçлас ĕçе сисĕнмелле тӳпе хывнă. Çакна каламалла, темăна прессăра анлăн сӳтсе явнипе тата Раççей Президенчĕ В. Путин пулăшнипе çĕршывра ял хуçалăх аталанăвĕ çинчен саккун никĕсĕ çинче патшалăхăн аграри политикине туса хума пултарнă. Сăмахран, çĕршывăн виçĕ çуллăх бюджетĕнче агропромышленноç комплексне аталантарма 2008 çулта 80 миллиард, 2009 çулта – 100 млрд., 2010 çулта 120 млрд. тенкĕ уйăрма пăхнă. Пирĕн республикăра çак тĕллевсем валли 500 миллион тенкĕ уйăрнă, кунсăр пуçне çак суммăран кая мар федераци бюджетĕнчен килет.

Ял хуçалăх министрĕ М. Игнатьев нацпроекта пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Чăваш Енри МИХсен ĕçне тивĕçлипе хак панă. Сăмах, паллах, наци проекчĕн пĕлтерĕшĕпе тĕллевĕсене ăнлантарса парасси пирки пырать. Малтанхи тапхăрта, чăнах та, ял çыннисен пысăк пайĕн шухăш-кăмăлĕ оптимистла пулман, нацпроекта бюрократла черетлĕ «вăйă» тесе шутланă. Журналистсем тăрăшнипе уйрăм хушма хуçалăха аталантарма çăмăллăхлă кредит илес текен хресченсен психологийĕ тĕпренех улшăнчĕ. Ăнсăртран мар ĕнтĕ, юлашки даннăйсем тăрăх, республикăра илнĕ кредитсен сумми 4 млрд. тенкĕрен те иртсе кайнă. Çак кăтартупа регион çĕршывра малта пырать.

Ял хуçалăх министерствин пуçлăхĕ журналистсене нацпроект Чăваш Енре еплерех пурнăçа кĕни çинчен каласа панă. Паллă ĕнтĕ, наци проекчĕн виçĕ тĕп тĕллевне палăртнă.

Пĕрремĕшĕ – выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине хăвăртрах аталантарасси. 2007 çул пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх, нацпроектăн малтан палăртнă контроллĕ цифрăсем сисĕнмеллех пысăкланмалла, уйрăммăн илсен, сĕт туса илесси 13 процент таран, аш-какайпа 8 процент таран ӳсмелле. Выльăх-чĕрлĕх комплексĕсене аталантарма май паракан тĕп çăлкуç çăмăллăхлă кредистсем пулса тăраççĕ. Пысăк комплекссене аталантарма нумай çуллăх кредитсен шайĕнче 2 млрд. тенкĕ янă. Çакă чи малтан производство культурин пачах урăх шайĕ патне илсе çитерет.

Иккĕмĕшĕ – пысăк мар фермăсене тата ял хуçалăх продукцине тирпейлекен кооперативсене (хуçалăха ертсе пымалли вак формăсене) аталантарассине хавхалантарасси. 2007 çулта кăна 13 пин ытла заемщик пурĕ 2 млрд. ытла тенкĕ кредит илнĕ.

Виççĕмĕш тĕллев – çамрăк специалистсене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси. Пирĕн республикăра кăçал патшалăх пулăшнипе 300 çамрăк çемье ытла пурăнмалли условисене лайăхлатнă. Çакă халĕ çамрăксем хулана тухса кайма тăхтани пирки калать. «Кадрсем яла таврăнаççĕ», – шанать ял хуçалăх министрĕ.

«Çавра сĕтел» пынă вăхăтра çакăн пек ыйту та пулчĕ: хальхи вăхăтра пирĕн республикăра ĕçлесе хатĕрлемен çĕр мĕн чухлĕ лаптăк йышăнать? «75 пин гектар», – хурав панă министр. Кăçал, акă, унччен усă курман çĕрсене 13 пин гектара яхăн çĕнĕрен пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Тата 3 çултан вара республикăра пушă выртакан çĕрсем пачах пулмĕç.

Унтан ĕçлĕ дискусси иртнĕ.

В. Денисов «çавра сĕтел» хушшинчи калаçăва пĕтĕмлетнĕ чухне çакна палăртса хăварнă: хаксем иртнĕ кĕркуннехи евĕр «ăнсăртран» хăпарса ан кайччăр тесен, çĕршывăн апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕ çинчен йĕркеллĕ саккун кирлĕ. Уйрăммăн илсен, хамăрăн рынока импортран хӳтĕлемелле, çунтармалли-сĕрмелли материалсем тата тырăн хакĕсене шайлаштарса тăрассине вăя кĕртмелле. Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин çĕнĕ йышĕ апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕн ыйтăвне татса парасса шанса тăратпăр.

***К. ДМИТРИЕВ.***

# ТЕХНИКĂНА ЮСАÇÇĔ-И?

**Çакă вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, юлашки çулсенче районти хуçалăхсенче машина-трактор паркĕсемпе тухăçлă усă курасси те, çĕнĕ техника туянасси те палăрмаллах чакрĕ. Ку вăл, паллах, çĕрĕç продукчĕсене кирлĕ чухлĕ туса илес ĕçре чăрмав кӳрет.**

Кунашкал лару-тăрура техника пурнăçлакан ĕç калăпăшĕ темиçе хут та ӳсет. Лару-тăрăва йывăрлатса тăраканĕ татах та пур, вĕсенчен пĕри вăл – техника паркĕсенчи агрегатсен ĕçлес вăхăчĕ тахçанах тухни. Паянхи куна илсен, çавăн пек техника йышĕ 70 процентран та иртсе кайнă. Кивĕ тракторсемпе е машинăсемпе, паллах, тухăçлă та кал-кал ĕçлесси пирки сăмах та пулма пултараймасть. Тата вĕсене тытса тăма тухакан тăкаксен виçи те пысăклансах пырать. Ялта тавар туса кăларакансем финанс тĕлĕшĕнчен йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ условисенче техника паркĕсен ĕçне тухăçлă йĕркелесе пыма пĕрре те çăмăл мар. Вăл е ку агрегат пулманни хĕрӳ тапхăрта ĕççене вăхăтра та пахалăхлă пурнăçлама чăрмантарни куç кĕретех.

Лайăх ăнланатпăр-ха, машина-трактор паркĕсемпе тухăçлă усă курас ĕçре техникăна хĕллехи управа вăхăтра лартнин тата ăна лайăх пахалăхпа юсанин пĕлтерĕшĕ пысăк. Çавна шута илсе, уй-хирти ĕççем вĕçленсенех, хуçалăхсенчи пĕтĕм агрегатсене те хĕл каçма лартас енĕпе кирлĕ ĕç туса ирттернĕ. Ку енĕпе районта ятарлă смотр-конкурс та йĕркеленĕ. Район пуçлăхĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн туса хунă ятарлă комисси çав тапхăрта хуçалăхсемпе кооперативсенче тата аграрлă тытăма кĕрекен ытти предприятисенче пулнă, вĕсем ял хуçалăх техникине хĕл каçма мĕнлерех лартнине тĕрĕсленĕ. Çавăн чухне комисси членĕсем çак ĕçе мĕнле пахалăхпа тунине, нефть продукчĕсен склачĕсем мĕнле лару-тăрура пулнине т. ыт. те тĕп вырăна хунă.

Смотр-конкурс кăтартăвĕсене районти механизаторсен канашлăвĕнче пăхса тухнă. Хуçалăхсен хушшинче пынă тупăшура Ильич ячĕллĕ колхозри техниксен паркĕ çĕнтерчĕ. Ял хуçалăхĕнче тата тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе ирттернĕ районти савăнăçлă пухура Чăваштимешсене пĕрремĕш степеньлĕ диплом тата укçан 1 пин тенкĕ преми парса чысланă. Ку хуçалăх механизаторĕсем кăçал та пысăк ӳсĕмсем тунинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Вĕсем çакна кун йĕркинче тытаççĕ: шанчăклăн юсанă техникăна çитĕнӳ тума пулать. Техника паркĕнче ĕçлекенсем кăçал та хăйсен тĕллевĕнчен пăрăнмарĕç. Хуçалăхри инженери служби юсавçăсен звенипе пĕрле хĕл кунĕсенчех акана хутшăнакан агрегатсене хатĕррисен ретне лартассишĕн тимлет.

Мана хамăн ĕçĕмпе час-часах районти хуçалăхсенче пулма тивет. Ильич ячĕллĕ колхозран яланах кăмăллăн таврăнатăп эпĕ. Кунти техника паркĕнче çак кунсенче те ĕç шавĕ илтĕнсе тăрать. Вăхăт çуркуннешĕн «ĕçлет» Чăваш Тимешре. Юсав ĕçне «Красный партизан», Калинин ячĕллĕ хуçалăхсенче те ырана хăварса пымаççĕ. Шел пулин те, хальлĕхе ытти парксенче шăплăх хуçаланать-ха. «Хĕрӳ кунсем çитиччен пурне те тума ĕлкĕрĕпĕр» текен шухăшпа лăплантараççĕ пулас хăйсене хăш-пĕр пуçлăхсем. Анчах та вăхăт пĕр вырăнта тăмасть-çке, вĕçĕмех малалла кайса пырать. Лайăх пахалăхлă юсав пултăр тесен, халех, пĕр тăхтаса тăмасăрах, техника паркĕсенче ĕçе кӳлĕнни кирлĕ. Инженери службисем енчен тимлĕхпе пуçарулăха ӳстермеллех. Унсăрăн ĕçе кал-кал та йĕркеллĕ туса пыма йывăр. Чăн та ĕнтĕ, васкамасăр, хыпăнмасăр тунă ĕç кăна шанчăклă та çирĕп пулса тухать.

***В. ГАВРИЛОВ,***
***техника асăрхавĕн районти инспекцийĕн пуçлăхĕ.***



Сергей Николаевич Алексеев «Красный партизан» колхозра выльăх пăхакан пулса ĕçлет. Унăн тăрăшулăхне, ĕçченлĕхне район ертӳçисем те асăрхарĕç, палăртмасăр хăвармарĕç. Вăл тĕрлĕ отрасльсенче вăй хуракан чи лайăх çамрăк специалистсен районти 2007 çулхи ăмăртăвĕнче «Аш-какай туса илекенсен отраслĕнче ĕçлекен çамрăксенчен чи лайăххи» номинацире çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ. Районăн 80 çулхи юбилейне паллă тунă кун ăна çак ятпа грамота тата асăнмалăх парне парса хавхалантарчĕç.

***Д. ДИМИТРИЕВ сăнӳкерчĕкĕ.***

## ÇУЛ ТĂВАССИ МАЛАЛЛА ПЫРАТЬ

Районта халăх пурăнакан ял-поселоксене хытарнă çул тăвасси малалла пырать. «Чăвашавтодор» патшалăх унитарлă предприятийĕн Йĕпреçри çул-йĕрпе юсав тата строительство управленийĕн вăйĕпе иртнĕ уйăхра Чăваш Тимеш – Ленинкасси автоçул ĕçе кĕчĕ. Çĕнĕ çул 1 çухрăм та 383 метра тăсăлать, ăна хывма пĕтĕмпе 18 миллион ытла укçа-тенкĕ тăкакланă.

Ленинкассисем çак парнешĕн республика правительствине чунтанах тав тăваççĕ, вĕсен тахçантанпах ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕ.

УВАЖАЕМЫЕ РЕКЛАМОДАТЕЛИ!
**Делайте бизнес с нами. Реальный тираж, реальная реклама.**
**Телефоны: 2-11-92, 2-11-97.**

СЫХЛĂХ

# ПИТĔРНĔ АЛĂК – ШАНЧĂКЛĂ АЛĂК

Криминаллă пулăмсемпе пуян саманара алăка хупă тытнинчен ырри çук. Ку сĕнĕве пăхăнакансен, кирек кама та хваттере чĕнсе кĕртме васкаманнисен сывлăхĕ те, хваттерти мул-пуянлăхĕ те тĕрĕс-тĕкел пулĕ. Милицире ĕçлекенсем çакăн пирки асăрхаттарсах тăраççĕ. Чи ансат çарату сценарийĕ çапларах: шăнкăравлаççĕ – уçаççĕ – çаратаççĕ. Хваттерсене хӳтĕлес енĕпе мĕн тумалли çинчен РФ Шалти ĕçсен министерствин Чăваш Республикинчи «Хурал» ФПУПĕн Йĕпреçри филиалĕнче интереслентĕмĕр. Çак предприятин тĕп специалисчĕ В. М. Шибаев пирĕн ыйтусем çине хуравласа акă мĕн каласа пачĕ.

1. Çемьери кашни çын çакна саккун вырăнне хурса пăхăнтăр. Шăнкăравларĕç – «алăк шăтăкĕнчен» (глазокран) тулалла тинкерĕр. Паллакан çынна курсан алăка уçма юрать. «Глазок – замок» йĕркене пурин те вĕренсе хăнăхмалла. Уйрăмах пĕчĕккисемпе ваттисене çак йĕркене ăнлантармалла. Вĕсем шухăшламасăр алăк уçма васкаççĕ.

Алăк çине ĕлĕк вăчăра вырнаçтарнă. Вăл ăна вăйпа уçма чăрмантарнă. Çавнашкал хурçă сăнчăр халĕ те ытлашши пулмĕ. Паллах, çитĕннĕ çын унашкал хатĕрпе усă курма вăтанарах парать. Кăлăхах: «Вăя хирĕç – ăс!» – тени çакă пулать те ĕнтĕ. Çаратакан кăмăлĕ, чăрмав тухсан, улшăнать. Унашкал çынсем шăв-шав тăвасран шикленеççĕ.

2. Алăк çывăхĕнче пуртă, çĕçĕ е ытти çавнашкал, преступник усă курма пултаракан, япала ан усрăр.

3. Хăвăртан шӳтлесе, кулма пăхакансен сăмахĕсене хăлхана ан чикĕр, тӳрре тухма та ан тăрăшăр. Эсир хăвăр çемьешĕн пăшăрханатăр, апла пулсан ытлашши кунта нимĕн те çук.

4. Палламан çынна алăк уçса кĕртес мар терĕр пулсан, çине тăрăр. Çав тĕллевпе каламалли сăмахсене малтанах тупса хатĕрлĕр. Калăпăр, çапла пĕлтерме пулать: «Çăра çĕмĕрĕлнĕ, уçăлмасть» е «калаçма вăхăт та кăмăл та çук». Алăк леш енчи çынсене нимĕн те ăнлантарма кирлĕ мар, калаçăва та хутшăнмалла мар. Официаллă çынсем килнĕ тĕк, вĕсен документчĕсене тĕрĕслемелле, çав организацие шăнкăравласа ĕненмеллех. Çакна пурнăçличчен алăка уçмалла мар.

Урăхла та пулма пултарать. Сирĕн хваттере çĕмĕрсех кĕресшĕн, хăтăлас шанчăк çук. Пуçа ан çухатăр, çак сĕнӳсене пăхăнăр:

1. Пĕр-пĕр пӳлĕме тарса пытанма ан тăрăшăр, кун пек тунин усси çук.

2. Алăка йывăр япаласемпе тĕкĕлесе хума тăрăшăр, чăрмав ытларах пултăр. Прихожăйра çакна тума май çук-тăк, урăх пӳлĕмри алăкпа усă курăр. Унта телефон аппаратне куçарăр. Телефонпа юнашар чи кирлĕ номерсен списокĕ пултăр. Сотовăй телефон çине те çав номерсене кĕртĕр.

3. Лару-тăру хăвăрт улшăнса пыни пирĕн сĕнӳсемпе усă курма памасан, юлашки меслете пурнăçлăр. Пĕр-пĕр пысăкрах япалапа кантăка çĕмĕрĕр. Кантăк çĕмĕрĕлнин сассине çынсем илтĕç. Кун пек чухне: «Пушар! Çунатпăр!» – тесе кăшкăрни халăха вырăнтан тапратать. Тапăнакана тăна кĕртет.

***А. АВЕРКИЕВ***
***çырса илнĕ.***

ÇĂМĂЛ АТЛЕТИКА

# МУСКАВРА ТА ПĔРРЕМĔШ!

**Эйпеçри вăтам шкулта ачасене лайăх пĕлӳ панипе пĕрлех ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен аталанса пыма шанчăклă условисемпе тивĕçтересси тĕп вырăнта.**

Кунти вĕренекенсем районти тата республикăри ăмăртусене пуçаруллăн хутшăннипе, вĕсенче лайăх кăтартусем тунипе паллă. Çак шкулта пĕлӳпе воспитани илнĕ Алексей Исаков та спортра, уйрăмах çăмăл атлетикăра пысăк çитĕнӳсем турĕ. Кăçал Вăтаел çамрăкĕ Эйпеçри вăтам шкултан вĕренсе тухрĕ, Шупашкарти электротехника колледжĕнче пĕлӳ илме тытăнчĕ. Вăтам дистанцисене чупассипе пĕр хутчен кăна мар район чемпионĕ пулнă студент кунта спортпа тата çывăхрах туслашрĕ. Колледж чысне тĕрлĕ шайри тупăшусенче чыслăн хӳтĕлет Алексей Исаков.

Нумаях пулмасть çамрăк спортсмен Мускавра сăртлă вырăнта чупакансен «Парсек-Трофи» тесе ят панă ăмăртăвне хутшăнчĕ. Мĕн тетĕр? Чăваш каччи, икĕ çухрăма пуринчен те хăвăрт чупса тухса, пĕрремĕш степеньлĕ диплом çĕнсе илме пултарчĕ. Ăмăртакансен хушшинче унпа танлашаканни никам та тупăнман.

Мускавран таврăнсан Алексей Исаков Çĕнĕ Шупашкарта ирттернĕ чупура 1500 метрлă дистанцире иккĕмĕш (4 мин. 17 çек.), 3000 метрлă дистанцире виççĕмĕш (9 мин. 04 çек.) вырăнсем йышăннă. Пĕрремĕш разрядлă атлетăн тĕп тĕллевĕ – çывăх вăхăтрах спорт мастерĕн виçине тултарасси.

Калас пулать, Алексейăн аппăшĕ те çăмăл атлетикăпа туслă. Эйпеçри вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Ирина Исакова (вăл районта ирттернĕ ăмăртусенче хĕрсем хушшинче тăтăшах çĕнтерӳçĕ пулса тăратчĕ) И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне кайса кĕнĕ. Алексей Исаковăн çитĕнĕвĕсемшĕн унăн малтанхи тренерĕ Владимир Григорьев та чунтан савăнать.

***Г. ВАСИЛЬЕВ.***

ЯЛ ПУРНĂÇĔ

# «АХ, АННЕÇĔМ, АННЕ – ЭСĔ МАНĂН ПĔРРЕ!»

Ялти шкул тата библиотека юлашки çулсенче аллаллăн тытăнса, ĕçе пĕрле йĕркелесе пурнăçлаççĕ. Пĕринче библиотека ĕçченĕсем шкулти мероприятие хутшăнаççĕ. Тепринче библиотека хăй хăнасене йышăнать. Аннемĕрсен кунне числăн кĕтсе илес тĕллевпе чаплă уяв йĕркелеме малтанах палăртнăччĕ. Çавăнпа ăна ирттерме чăрмавсем пулмарĕç. Вулав залне Чăваш Тимешри вăтам пĕлӳ паракан шкулăн 2-мĕш класĕнче вĕренекен ачасем тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсем пуçтарăнчĕç. Елена Феофиловна Титушина ачасене «Манăн анне чи хитри» конкурс пуласси çинчен вăхăтра пĕлтернĕ. Çавăнпа ун класĕнчи кашни ача хăйĕн амăшĕн сăнарне хут çине тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсемпе куçарнă, çырса та кăтартнă. Шăпах килте пурнăçланă çак ĕçсен ачасем амăшĕсемпе пĕрле паллаштарчĕç те ĕнтĕ. Сăмах май каласан, Е. Титушина хăй те 6 ача амăшĕ. Çавăнпа çемьери хутшăнусем епле йĕркеленни уншăн çĕнĕлĕх мар, пачах урăхла – вăл туслăх, килĕштерӳлĕх вăрттăнлăхĕсене туллин уçса пачĕ. Çакă уйрăмах амăшĕсем хушшинчи конкурсра уçăмлăн палăрчĕ. Амăшĕсен ачасем çырнă ĕçсене, хăйĕн ывăлĕ е хĕрĕн тетрадьне тупма тиврĕ. Кăткăс ĕç ку. Тетрадь çинче ни ячĕ, ни хушамачĕ паллă мар-çке. Харпăр хăй ачин почеркне пĕлни çеç пулăшрĕ ку конкурсра. Амăшĕсем, паллах, хăйсен ачисене шыраса тупрĕç. Малалла ташă-юрă, сăвă янăрарĕ. Пурте аннесене халалланисем. Куракансем тĕлĕнчĕç, савăнчĕç, тăвăллăн алă çупрĕç.

Халĕ телевизора кăмăллакан, çавна май вулама юратман ачасем йышлă пулни çинчен калаçаççĕ. Чăваш Тимешри шкулăн иккĕмĕш класĕнче вĕренекенсем кĕнекепе шутсăр туслă. Хăвăрах шутлăр-ха, акă, Анжелика Антонова вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа 28 кĕнеке вуланă, Виталик Сюдамов – 24 кĕнеке, Александра Викторова – 17 кĕнеке. Ку енĕпе ăмăртăва библиотека ĕçченĕсем йĕркеленĕ, вĕсемех хак пачĕç. Çӳлерех асăннă ачасем 1-3 вырăнсене йышăнчĕç, шутсăр маттур вулавçăсем пулчĕç вĕсем. Çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçиччен кашниех нумай-нумай ыйту çине хуравларĕ. Темĕн те ыйтаççĕ ачасенчен: мĕнле кĕнеке вулани, унăн содержанийĕ, пĕрремĕш кĕнеке, чи асра юлнă кĕнеке çинчен каласа памалла пулчĕ. Тем пекех тĕпченĕ хыççăн пурте çапла килĕшрĕç: «Ачасем парне илме тивĕçлĕ!» Аннесем çак уявра савăнчĕç, ачасем те кăмăллă юлчĕç. Уява йĕркелекенĕсем те хăйсен ырă ĕçне ял-йыш лайăх хакланишĕн хĕпĕртерĕç.

***З. МИХАЙЛОВА,***
***библиотека заведующийĕ.***

# «ЭПĔ – РАÇÇЕЙ ГРАЖДАНИНĔ!»

Шкулта вĕренекен ачасен гражданла тата патриотла пахалăхĕсене вăйлатас тĕллевпе Пăкăянти тĕп шкулăн 9-мĕш класĕнче А. Н. Терентьева класс руководителĕ ертсе пынипе «Эпĕ – Раççей гражданинĕ!» ятпа конкурссен касĕ иртрĕ. Ку чи малтанах ачасен пĕлĕвне тĕрĕслесе пăхни пулчĕ, мĕн пĕлеççĕ-ха вĕсем гражданлăх, референдум, Президент, Федераци, Конституци, юстици тата ытти ăнлавсем пирки?

Пытарма кирлĕ мар, хальхи вăхăтра шкул ачисем хушшинче усал сăмахсемпе перкелешекенсене, аслисем кĕçĕнреххисенчен укçа туртса илнĕ тĕслĕхсене час-часах курма пулать. Çакнашкал йĕркене пăснисемшĕн мĕнле саккунсемпе тата мĕнлерех яваплăх кĕтни çинчен витĕмлĕ калаçу пулчĕ. Çамрăксем РФ Уголовнăй кодексне те, Административлă право йĕркине пăснисен кодексне те пĕлеççĕ иккен, вĕсем ыйтусем çине тĕрĕс те тулли хуравсем пачĕç.

Конкурсра çавăн пекех çыннăн гражданла прависем çинчен те ыйтусем сахал мар пулчĕç, ачасем валли класра хăйне евĕрлĕ «Юрист консультацийĕ» ĕçлерĕ. Вĕренекенсем хăйсен пĕлĕвне практикăлла ĕçсенче те тĕрĕслесе пăхрĕç. Конкурссене пурте активлă хутшăнчĕç, Маргарита Яичникова, тĕрĕс хуравсем ыттисенчен нумайрах парса, çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ.

***Е. ОСИПОВА,***
***шкулти вожатăй.***

# ПРИЗЛĂ ВЫРĂНСЕМ ЙЫШĂННĂ

Нумаях пулмасть Канаш районĕнчи Пикшикре ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен республикăри ăмăртăвĕсем пулса иртнĕ. Кĕрешӳçĕсем Канаш районĕнчен тухнă пĕрремĕш СССР спорт мастерĕн, Чăваш Республикин физкультурăн тата спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн Геннадий Смирновăн ятне асăнса ирттернĕ ăмăртусенче хăйсен ăсталăхне çӳллĕ шайра кăтартнă. Пирĕн районтан кайнă спортсменсем те (вĕсен тренерĕ Ф. Н. Максимов) ăста тупăшнă. Вячеслав Васильев хăйпе пĕр пек виçеллĕ (58 кг) спортсменсем хушшинче ăмăртса 1-мĕш, Георгий Никитин (50 кг) 1-мĕш вырăнсене йышăннă. Евгений Петров 54 килограмлă виçере 2-мĕш вырăна тухнă.

# ТАРĂН ШУХĂША КАЙНĂ МАЙ...

Истори урапи пĕр чарăнмасăр
тек çаврăнать. Вăл ĕмĕр юхăмне,
каска-чăрмавсене пач парăнмасăр,
хуса кĕртет, кĕтӳç пек, çулсене...
Эп вăхăт чатăрне сирсе пăхатăп
Хыçри çулсем çине ăмсанупа.
Пуçра вĕри шухăшсене пухатăп,
Пуплес тесе умри килес кунпа.
Кун-çул таппи çăл куçĕ пек хăватлă,
Вăл хăварасшăн мар çав хăйĕнчен.
Юлмашкăн шут тытсан, сана вăл ятлĕ,
Тăрса юлсан, мĕн тăвăн эс пĕччен?
Асаттесен мухтавлă çулĕ-йĕрĕ
Тăрайтăр çиçĕнсе тасан кăна.
Вăл пултăр ĕмĕр-ĕмĕр çутă, чĕрĕ,
Сӳнсе ларма памалла мар ăна...
Çак тĕллевпе ĕç сунталне шаккатпăр,
Тăварлă тар касать те аçлăка,
Çунатлă ĕмĕтпе эпир васкатпăр
Юр ӳкиччен тухма каçалăка...
Хальччен мĕн тунипе çырлахмасассăн,
Илсе пырсассăн çĕнĕ чикĕсем,
Çул вĕçĕнче эс курăнмăн хавассăр,
Çана чечек тыттарĕç пикесем...
Ĕç пархатарĕ кӳрекен телейĕн
Чечен шевли йăмăхтармасть куçа.
Паттăрсене савса çӳле çĕклетĕн
Сар тулă кĕлтине, тайса пуçа...
Каппайланас шутпа çапла тумастăп,
Çапла тума ыйтать манран чĕре.
Çакна пурнăçлама пултараймас-тăк,
Ма пурăнас харам çут тĕнчере!
Пире кĕрешӳре пиçме пилленĕ
Атте-анне, тыттарнă май çурла.
Эпир хĕвел сăнĕпеле тĕрленĕ
Çавра сар çăкăра юрла-юрла...
Халь мăнуксем хир еннелле утманшăн
Сурсах-çке ыратать пăлхавлă чун.
... Мĕн илсе килĕ-ши çĕн саманашăн
Питне пĕркенчĕкпе хупланă кун?..

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

# «ÇĔНТЕРӲШĔН» ХАÇАТА ÇЫРĂНМА ВАСКĂР, РАЙОН ХЫПАРÇИСĔР АН ЮЛĂР!

**Хаклă тусăмăрсем, хисеплĕ вулакансем! «Çĕнтерӳшĕн» хаçата 2008 çулхи пĕрремĕш çур çул валли çырăнтармалли тапхăр пырать. Ăна çак хаксемпе çырăнтараççĕ:**

**ПОЧТА ÇЫХĂНĂВĔН УЙРĂМĔСЕНЧЕ – 169 тенкĕ те 62 пуспа;**

**«ЧĂВАШПИЧЕТ» АУО КИОСКĔНЧЕ – 120 тенкĕпе;**

**ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔНЧЕ /альтернативлă майпа/ – 105 тенкĕпе.**

# ПОПРАВКА

В официальном приложении Ибресинской районной газеты «За победу» (№№97-98 от 28 ноября 2007 года) опубликовано решение Собрания депутатов Ибресинского района «О внесении изменений в Положение «О вопросах налогового регулирования в Ибресинском районе, отнесенных законодательством Российской Федерации о налогах и сборах к ведению органов местного самоуправления». В приложениях №3 («Таблица корректирующих коэффициентов базовой доходности розничной торговли в п. г. т. Ибреси») и №4 («Таблица корректирующих коэффициентов базовой доходности розничной торговли в сельской местности») в пункте 1 допущены неточности: вместо «Производственными товарами» следует читать **«Продовольственными товарами»**, вместо «Непроизводственными товарами» следует читать **«Непродовольственными товарами».**

# ПОЗДРАВЛЯЕМ

В этот прекрасный зимний день декабря мы от всей души, горячо и сердечно поздравляем дорогую, любимую дочь, жену, маму, свекровь, бабушку, сестру – **МУРЗАЕВУ Елену Павловну,** заведующую магазином «Продмаг №1» Ибресинского райпо, проживающую в п. Ибреси, – с замечательным юбилеем. Желаем всего того, чем жизнь бывает светла и прекрасна: здоровья, радости, любви, счастья, благополучия.

Будь веселой, нежной, ясной,
Беззаботной и прекрасной,
Чтоб смеялась ты беспечно,
Чтобы длилось счастье вечно.
Чтобы все мечты сбывались
И желанья исполнялись,
Чтоб была ты, как весна,
Юной прелести полна.

***ОТЕЦ, МУЖ, СЫНОВЬЯ, СНОХА, ВНУЧКА, СЕСТРЫ, БРАТЬЯ И ИХ СЕМЬИ.***

# РЕКЛАМА И ОБЪЯВЛЕНИЯ

**В ООО «ДОМАШНЯЯ МЕБЕЛЬ»**

имеется вакансия сменного мастера производственного цеха: оплата высокая? Требования% опыт работы по специальности?

Обращаться% п? Ибреси: ул? Газопроводная: 21? Телефон% 2-25-95?

**АТЕЛЬЕ «ГОЛОВНЫЕ УБОРЫ» г. Чебоксары**

**7 декабря с 9 до 17 часов в Ибресинском Доме культуры производится прием заказов на ремонт и переделку зимних меховых шапок.**

**Выдача заказов с 3 декабря переносится на 7 декабря.**

2-2

**894. ТРЕБУЮТСЯ станочники, рамщики, разнорабочие. Оплата труда сдельная. Тел.: 89276662942.**

6-4

**916. ПРОДАЮ керамблоки с доставкой. Тел.: 89278444720.**

**917. ПРОДАЮ «Газель»-фермер 2006 г. в. Т.: 89278511700.**

2-1

**918. ПРОДАЕТСЯ а/м ГАЗ-2705 1997 г. в. грузопассажирский. Цена договорная. Т.: 89093045965, 2-27-56.**

**ПРОКУРАТУРА района снимет квартиру в центре п. Ибреси на длительный срок для оперативного работника. Тел.: 2-28-56, 2-12-65.**

**919. ПРОДАЮ а/м ВАЗ-21063 1997 г. в. Т.: 89276653805, 2-43-34.**

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

**Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР**

**Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6**

**ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, производственный участок — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.**

**Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.**

**Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3279: чув. – 2410, русск. – 869. Зак. №**

**Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓡ**

**Срок сдачи в печать — 17.00**
**Сдан в печать в 10.00**

**Ответственный за выпуск Быкова С. В.**